ДАНИЛОВ М.

# ТАЙКАРА

3 пайлă, 4 карттинлă трамă

СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттĕлстви
1929

ДАНИЛОВ М.

# ТАЙКАРА

4 пайлă, 5 карттинлă трамă

Ретактăрĕ Г. А. МОЛОСТОВКИН

СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттĕлстви
Мускав 1929

КНИЖНАЯ ФАБРИКА
ЦЕНТРАЛЬНОГО
ИЗДАТЕЛЬСТВА
НАРОДОВ СССР
МОСКВА ШЛЮЗОВОЙ
ПРОЕЗД ДОМ №6

Главлит № А. 33507
Тираж 2000 экз.

Заказ № 223

*1918 — 19-МĔШ ÇУЛСЕМ ХУШШИНЧЕ КОЛЧЧАК ПУСМĂРĔ ВĂХĂТĔНЧĔ РАПОЧЧИСЕМПЕ ХРЕСЧЕНСЕМШĔН ÇĔПĔР ТАЙКИ ТА́РĂХ СЫРĂВ ОТРЕЧ̣ĔПЕ ÇАПĂÇÇА ВИЛНĔ ПАРТТИСАНСЕНЕ, ТАТА ХАЛĔ ТЕ СЫВĂ ПУРĂНАКАН НИККĂН КРИКОРЧ КРИКОРИЁВ ЙУЛТАША АСĂНСА ÇЫРАТĂП.*

———

# УМӖНХИ СӐМАХ

Ҫӗпӗрти парттисансем Колт̧т̧ак ҫарӗпе кӗрешни ҫинт̧ен т̧ӑвашла сырнӑ пйессӑсем халит̧т̧ен епӗ курман. 1918-19-мӗш ҫулсент̧е парттисансен кӗрешӗвӗ, ман шухӑшпа, револ̧утси историйӗнт̧е пӗр т̧аплӑ вырӑн йышӑнса тӑмалла пек туйӑнат; ҫавӑнпа ҫакӑ „Тайкара“ йатлӑ пысӑк мар трамӑна, Ҫӗпӗрте Колт̧т̧ак пусмӑрӗ вӑхӑтӗнт̧ӗ хам куҫпа курса, пӗлсе тӑни ҫинт̧ен ҫырас терӗм. Ҫак трамӑ т̧ӑваш семшӗн усӑллӑ йапала пулӗ тесе шутлатӑп.

Трамӑра ҫитменлӗхсем те пулӗҫ; ҫав ҫитменлӗхсене, йе ҫыру тӑрӑх, йе хаҫат-шурналсем урлӑ кӑтартса пама ыйтатӑп.

ДАНИЛОВ М. Н.

## ВЫЉАКАНСЕМ:

1. Никкăн—21 çулта. Çырăва пĕлекенскер ђухăн çын ађи, салтака лекет. Йĕркеллĕ, хулăн сасăпа калаçаҭ.

2. Куçма — 21 çулта. Çырăва пĕлмест. Никкăнпа пĕрле салтака лекет. Хăравçă, хĕрлисем çентерессе ĕненсех каймасҭ.

3. Улйана—18 çулта. Йалти шкулта вĕреннĕ, çемçе кăмăллă хĕр. Никкăнпа тӳрĕ пурăнаççĕ.

4. Пăраски — 20 çулта. Çырăва лайăх пĕлет, хытă кăмăллă хĕр, хăрамасăр калаçаҭ, нумай ваклама йуратмасҭ. Куçмапа тӳрĕ пурăнаççĕ.

5. Çăхан Петĕрĕ—45 çулта. Пуйан çын, йалти старăста, ђейе, йуптарса калаçаҭ.

6. Вĕлтĕрен Иванĕ—35 çулта, çыруçă (тийек) ĕçекен çын, аташса калаçаҭ.

7. Сырăв — 30 çулта, карателни отрет пуçлăхĕ, усал, хăраман çын, Колђђакшăн хытă тăраҭ.

8. Хаврӳк—35 çулта. } Караттĕлни отрет салтакĕсем (ђалтунсем)
9. Аккук—28 çулта, хăравçă.

Парттисансем.

Выђани 1917-19-шĕш çулсем хушшинђе, Çĕпĕрте Колђђак пусмăрĕ вăхăтĕнђе пулса иртет.

# ПӖРРЕМӖШ ПАЙӖ.

Ҫулла. Улйана ашшӗн пӳрђӗ. Стсенӑ тӗпӗнђе пӗр алӑк, сылт̣ӑмра та, сулахайрӑ та пӗрер ђӳређе, ђӳређисем уҫӑ. Пӗр сӗтел. 4-5 каска пуканӗсем. Ђаршав уҫӑлнӑ вӑхӑтра Улйана кӗвентепе шыв йӑтса кӗрет.

---

## ПӖРРЕМӖШ КУРӐННИ.

Уԓйана (витрисене лартса). Ах, тӳсмелле мар шӑрӑх. Ҫӑмӑре те ҫумаст̆ хут̆. (Хулпуҫисене тытса) Ку купӑста йӑранӗсене шӑварма шыв йӑта-йӑта хулпуҫисем пӗрте йулмарӗҫ. Хирте тыррисем хӑйне типсе, ӗнсе лараҫҫӗ. Ута тухас вӑхӑт та ҫитсе килет, курӑкӗ те ҫавана лекмеллӗх ҫук, Ех, самана... типӗтсе, ҫунтарса пӗтерестӗн пуԓ... (Никкӑн ђӳређерен пырса пӑхат̆).

## ИККӖМӖШ КУРӐННИ.

Никкӑн (ђӳређерен пуҫне ђиксе) Авани Улйана! Мӗншӗн пит хуйхӑлӑ есӗ пайан? Тен пиђђӳсенђен ырӑ мар хыпар илтӗн-и?..

Уԓйана. Ҫук. Пиђђесенђен ҫыру илменни тӑватӑ уйӑх тулса пиллӗкӗмӗш сине кайрӗ ӗнтӗ. Пӗлместӗп, те вилӗ, те

ҫĕрĕ... Вĕсем килтен тухса кайнăранпа ырă кун ҫул курман ĕнтĕ, ҫап-ҫамрăк пуҫăм ҫинҫе пĕтĕм ҫурт ĕсĕ тăрат: выҫă-хĕсене пăхмалла, пахҫине шăвармалла... пĕҫҫен ҫынна кил хушшинҫе ĕҫĕ ҫитет. Акă тата утта тухас вăхăт ҫитет. Утине ҫулса пуҫтармалла. Унтан—сахал та пулин—тыррисем ĕлкĕрĕҫ, вĕсене пуҫтармалла. Кампа?.. Пĕҫҫен.

Ҫак урнă вăрҫă пулман пулсан, пиҫҫемсем килте пулнă пулĕҫҫĕҫ, мана та кунашкал йывăр пулмĕҫҫĕ, епĕ те ҫынсем пек вăййа тухса ҫӳрĕттĕм. Куҫҫӳл тăкса, пуҫа усас вырăнне савăнса уйав йурри йурлăттăм... Хăҫан пĕтĕ-ши ку вăрҫă? Хăҫан тавăрăнĕҫ-ши пиҫемсем? (аллисемпе питне хупласа йĕрет).

Н и к к ă н (ҫӳреҫерен сиксе кĕрсе). Уҫйана! Уҫйана! Ан йĕр-ха. Куҫҫӳл тăкса кӳлĕ тăвас ҫук. Пĕркунах каларăм-ҫке: уттăна ҫулма, тыррусене пуҫтарма хам пулăшăп, тесе.

У ҫ й а н а? Епĕ сан ҫине шанатăп, есĕ анҫах йалта мана пулăшакан, нумай пулăшрăн. Тавтапуҫ сана уншăн, ĕмĕрне манас ҫук епĕ сана...

Н и к к ă н. Епĕ те манас ҫук та сана, анҫах ҫак урса кайнă, ҫарăна пĕлмен вăрҫă пире, йе вăхăтлăха, йĕ ĕмĕрлĕхе уйăрса та йама пултарать. (Айккинелле пăхса хуллен). Пĕлтерсен каллех йĕрет ĕнтĕ. Уҫйана, итле-ха... (пуҫне ҫикет).

У ҫ й а н а. Епĕ итлеп. Кала мĕн каламалли пур?

Н и к к ă н (ҫавăрса калаймасăр). Пи-пи-пир-пирĕн ҫулхи ҫамрăксене салтака илмелле теҫҫĕ...

У ҫ й а н а (кăкăрне тытса) Каллех тепĕр пысăк хуйхă. Ҫук, ҫук, Никкăн! Есĕ ан кай, шелле мана. (Никкăнăн мăййĕ ҫине ҫакăнать).

Н и к к ă н. Епĕ каймăттăм та вĕт, ирĕксĕр илсе кайаҫҫĕ. Каймасан тытса шомпăлпа хĕртеҫҫĕ. Шуйттансем... (Куҫма кĕрет).

## ВИҪҪЁМЁШ КУРӐННИ.

**Кусма** (карттусне хывса). Авани-ха Уљйана! (Никкӑн йеннелле пӑхса) Санпа курнӑҫнӑђђӗ пулас пайан?

**Уљйана.** Аван-ха, ху аван-и? Иртсе лар.

**Кусма** (унталла кунталла пӑхкаласа). Мӗншӗн кӑҫал вӑййа тухса ҫӳреместӗн? Карђӑк пек йалан килте ларан.

**Улйана.** Ех, Кусма, халӗ вӑййӑ шухӑшӗ-и, пуҫра йӑтайми хуйхӑ ђух (Никкӑн ђӳређерен тулалла пӑхаҭ).

**Кусма.** Те-те-те... Йӗрет ҫав. Никкӑнран уйрӑлас килмест иккен.

**Никкӑн** (ҫиленсе). Мӑшкӑласа ан тӑр-ха. Хӑҫан каймаллине пӗлсе килтӗн-и?!

**Кусма** (айӑплӑн). Ыран ирех тухса каймалла терӗ ҫӑхан Петӗрӗ.

**Никкӑн** (уткаласа ҫӳресе). Ыран... ирех. Ех, йытӑсем...

**Кусма.** Никкӑн, аҭа-ха пирӗн пата, епӗ унта пӗр ђетвӗрт хатӗрлесе хунӑђђӗ. Йулашкинђен ӗҫсе тухса кайар, хуйха пӗтерер.

**Улйана** (Никкӑна аллисенђен тытса). Никкӑн, ђунӑм, ан кай. Йулашкинђен пӗр-пӗринпе калаҫса йулар. Пӗр тухса кайҫан, урӑх те курайӑпӑр, те ҫук (йӗрет).

**Никкӑн.** Ех, Куҫма! Пӑхатӑп та еп сан ҫине, нимӗн те пӗлместӗн. Сана кайса пултӑр, малта мӗн пуласса, кайра мӗн йулнине курмастӑн. Пӗр ђетвӗрт хатӗрлерӗм? Ђетвӗрт ӗҫнипе ӗҫ пулат-и? Ҫавӑнпа ыранах тухса кайма пуҫтарӑнатӑн-и есӗ? (Уљйана лараҭ).

**Кусма.** Есӗ хӑҫан?

**Никкӑн.** Епӗ хӑҫанне пӗлместӗп-ха. Тата пӑртак килте пурӑнас теп-ха.

**Куçма.** Пурăн, пурăн. Пурăнтарĕ сана Çăхан Петĕрĕ. Купарҫун тирĕсем çирĕп пулсан, пурăнса пăх.

**Никкăн.** Есĕ хăвăн купарҫу тирĕсене питĕ шеллетни вара? Çавăнпа хăраса ыранах тухса кайма пуçтарăнатни-мен? Мĕн тума пултарĕ вара Çăхан Петĕрĕ мана. Кала-ха?!

**Куçма** (айăплăн). Нимĕн те тума пултараймĕ те... Çапах унтан хăрас пулаҫ. Вăл вĕт йал пуçлăхĕ. Епĕ те ан итлем, есĕ те ан итле, ыттисем те ан итлеҫҫĕр, пирĕншĕн вĕт ăна хăйне хĕстереççĕ.

**Никкăн.** Хĕстереççĕ? Камсене хĕстереççĕ? Санпа ман пеккисене анҫах хĕстереççĕ, Йумансене пĕртте хĕстермеççĕ. Вĕсем килĕсенҫе пурăнаççĕ. Ав куратни пуйан Мишша Кĕркурине? Пĕлтĕрех салтакра пулмалла, вăл хаҫ те килĕнҫе пурăнаҫ. Кам хăварҫĕ ăна? Çăхан Петĕрĕ мар-и?!.

**Куçма.** Вăл аплине аплата -ха, епир вĕт Мишша Кĕркурийĕ мар, вăл укçа парса йулҫĕ. Сырăвпа Çăхан сахалах мар унтан шăйăрҫĕç пулĕ. Сырăв хаҫ те, килмессерен ун патне кĕрет, Çăхан капни кун унта ĕçет. Епир мĕнле салтакран йулма пултарăпăр? Пирĕн вĕсене пама укçа çук вĕт?

**Никкăн.** Епĕ Сырăвпа Çăхана укçа парса салтакран йуласшăн мар. Салтака каймастăп та.

**Куçма.** Тĕлĕнмелле калаçан есĕ Никкăн. Укçапа салтакран йуласшăн мар, каймастăп та тетĕн. (Кулат) Ха-ха-ха!.. Мĕнле-ха есĕ апла йуласшăн? Есĕ çветтуй мар вĕт!

**Никкăн.** Ҫим-ха, ухмах пек ан кул-ха. Епĕ мĕнле йулассине пĕлессӳ килсен, каласа парас. Акă мĕнле. Анҫах есĕ никампа та ан калаç.

**Кусма.** Йурĕ калаçмăп.

**Никкăн.** Йалтан тухса каймасăр килте пурăнма май килмест. Анҫах кайсан та, çав йун ĕçекен пуйансемшĕн мар, вĕсене хирĕç тăрса çапăçма кайас пулаҫ. Ху шухăшласа

пăх-ха, хĕрлисем камсем? Хамăр пекех ĕçлекенсемпе хресţенсем мар-и? Вара сан шухăшупа хамăр пек ĕçлекенсемпе хресţенсене хирĕç каймалла-и? Çук, йулташ! Халĕ çула кашни хăва тĕми хăвăттер йараť. Кайар-ха, йулташ, тайкана, унта пĕр-пĕр парттисан отретне çитсе хутăшăпăр та, аслă тайка варринţе ирĕккĕн çӳрĕпĕр. Колţţак çарне хирĕç тăрса çăпăçăпăр. Нумай йулмарĕ ĕнтĕ, çĕнтерес вăхăт çитет. Илтменим есĕ, хĕрлисем Урал тăвĕсем урлă каçнă тенине. Ţас Сĕпĕре çитĕç. Хĕрлисем хыçалтан, епир малтан çĕмĕре пуçласан, тăшмана тата хăвăртрах сĕнтерме пулăшăпăр.

К у ç м а. Ку шухăшсем сан питĕ аван та, епĕ çапах та ĕненсех каймастăп, мĕншĕн тесен те хĕрлисем, те шуррисем çĕнтереççĕ. Хĕрлисем çĕнтерессе пĕлсен, епĕ те санран йулмăттăм та, анţах хăратăп, шуррисем çĕнтерсен ăçта кайса кĕрĕпĕр вара? Пурпĕрех тытса, йе персе вĕлерĕç, йе ĕмĕрлĕхе тĕрмене хупса лартĕç.

Н и к к ă н. Тĕрмене хупасран, персе вĕлересрен хăрасан, çут тĕнţере пурăнма та йурамасť, пурне те тĕрмене хупса, персе вĕлерсе пĕтерейменĕç! Çакăнтан Колţţак çарне салтака кайсан вилмĕп, ţĕрĕ йулăп тетĕним? Курмастăним есĕ мĕн ţухлĕ çын тайкана пуçтарăннă, вĕсем вилме пуçтарăнаççĕ тетĕн пуļ. Çук йулташăм! Пĕри те вилесшĕн мар. Колţţак пусмăрне пĕтерсе, Раççейри пек Совет влаçĕ тăвасшăн тăрăшаççĕ. Тĕрĕс, есĕ те, епĕ те, ыттисем те хăраса Колţţак патне слушит тума кайсан, çĕнĕ, тин çуралнă Совет влаçĕ пĕтсе, пуйансен влаçĕ пулса тăма та пултараť. Анţах пирĕн, çав хаклă йунпа тупнă влаçа пĕтме памалла-и?.. Çук! Памалла мар!.. Çапла пулсан санăн та, манăн та, ыттисен те—пурин те Колţţака хирĕç тăмалла. Йулашки хут калатăп—хуť енен, хуť Колţţак патне кай, хуť манпа тайкана пыр—хĕрлисем çĕнтерсе, Совет влаçĕ пулассине епĕ кĕтсе тăратăп. (Пăраски кĕрет).

П ă р а с к и (кĕнĕ майпа). Куçма, аҫа ҫасрах, аçупа анну кĕтсе те ывăнҫĕç пуҫ. Кайрăн та çухалтăн.

Н и к к ă н. Халĕ çухалман-ха, акă Колҫак патне слушит тума кайсан тин çухалĕ.

У ҫ й а н а. Пăраски тусăм, тĕпелелле иртсе лар. (Пăраски иртсе, Уҫйана çумне ларать, пăшăл-пăшăл калаçаççĕ).

К у ç м а. Ҫăнах калатăн есĕ, Никкăн. Хĕрлисем çĕнтерĕç. Санăн сăмахусем тĕрĕс. Пĕркун епĕ тайкана лаша шырама кайрăм, çавăн ҫух пĕр вăтăр-хĕрĕх... çĕр те пур пуҫ, пирĕн пек йуланутлă çамрăксене, пилĕк таран сухаллисене куртăм. Шутласа та кăларас çук, пурте пăшалсемпе ман умма сиктерсе пырса тухрĕç. Çавсем пуҫ ĕнтĕ есĕ калакан парттисансем.

Н и к к ă н. Вăт самăй çавсем пулаççĕ ĕнтĕ.

К у ç м а. Апла пулсан епĕ те санран йулмастăп, санпа пĕрле тайкана таратăп. Кайран унта хуть те мĕн пултăр. Çăханпа Сырăв тек пире тайка тăрăх шыраҫҫăр.

Н и к к ă н. Ман сăмахсене тинех ĕнентĕн-и ĕнтĕ?

К у ç м а. Ĕнентĕм. Çавăнпа та санран йулмастăп тетĕп.

Н и к к ă н. Хĕрлисем çĕнтерессе ĕненетĕн пулсан, нумай вăхăт ирттерсе тăрас мар. Халех Çăхан Петĕрĕ патне кайар та, çурçĕрҫҫенех хулана салтака тухса кайатпăр тесе, каймалли хутсене илер те, кĕçĕрех тайкана вĕçтерер. Йурать-и?

К у ç м а (савăнса). Йурать!

Н и к к ă н. Ну, пар аллăна! (Куçма аллине парать). Итле, пĕр-пĕрне пăрахас мар, сана йывăр пулсан епĕ пулăшăп, мана есĕ пулăш (ҫуптăваççĕ).

У ҫ й а н а. (Пăраскийе ыталаса). Тусăм, савнисенҫен уйрăлса йулатпăр. Кам пулăшĕ-ши! Мĕнле ирттерĕпĕр-ши ĕмĕре? (йĕрет).

Пăраски. Тусăм, ытлашшки ан йĕр, куççуҫ тăкса куçна ан хĕрет. Вĕсене ахаҫ те йывăр, йĕрсе ҫĕрисене ан хускат, ырă-сывă çÿресе таврăнсан, вĕсем пире пăрахас çук.

Никкăн. Ну савнисем, сыв пулăр!

Куçма. Ҫипер йулăр, ан манăр (Никкăнпа Уҫйана, Куçмапа Пăраски пĕрне-пĕри ҫуптăваççĕ)! Револютси сывă пултăр! Тайка сывă пултăр!

(*Ҫаршав*).

# ИККĔМĔШ ПАЙ.

Çĕрле. Çăхан Петĕрин пÿрҫĕ. Тĕпелте икĕ ҫÿреҫе, иккĕшне те шурă каркăçпа карнă. Сылтăмра та, сулахайра та пĕрер алăк, вăта çĕрте шурă сĕтел çитти витнĕ пĕр сĕтел, 4-5 венски пукансем. Сулахай кĕтесре турăшĕ, лампă çунаŷ. Ҫаршав уçăлнă вăхăтра Çăхан Петĕрĕ сĕтел хушшинҫе лараŷ, умĕнҫе пĕр палăштух ерех, ҫĕрккесем. Велтĕрен Иванĕ ÿсĕртерех, тайкаланса пырса кĕрет.

## ПĔРРЕМĔШ КУРĂННИ.

Вĕлтĕрен (аллине парса). Авани-ха Петĕр Куçмиҫ! Мĕн тума кирлĕҫҫĕ епĕ?

Çăхан. Аван-ха, лар. Ыран салтак аҫисене ăсатасси çинҫен калаçăпăр, çавăнпа ҫĕнтертĕм (Вĕлтĕрĕн лараŷ). Ну, йепле-ха, ăсатмалли хутсене пурин ваҫҫи те хатĕрлесе хутăн-и?

Вĕлтĕрен. Хатĕр. Иккĕшĕ кĕçĕрех хулана тухса кайатпăр тесе, пырса илсе те кайрĕç ĕнтĕ.

Ç ă х а н. Камсем?

В ĕ л т ĕ р е н. Никкăнпа Куçма.

Ç ă х а н (сиксе тăрса). Мĕншĕн мансăр пуçнех, манран ыйтмасăрах патăн!

В ĕ л т ĕ р е н. Апла вĕсем манран улталаса илҫĕç пуљ. Петĕр Куçмиҫ пама хушрĕ тесе суйрĕç. Есĕ пама хушманим?

Ç ă х а н. Ç-у-у к... Манран ыйтман вĕсем. Епĕ вĕсене ĕнер курман та, (пуçне хыçса) ак шуйттансем. Мур пакартисем. Хулана кайатпăр тесе тайкана ан вĕçтерҫҫĕр вĕсем... Çав йенҫен хăрушă...

В ĕ л т ĕ р е н. Пулĕ те. Никкăн вăл тахçанах, салтака лексенех тайкана таратăп тесе çӳренĕ тет.

Ç ă х а н (хăвăрт утса çаврăнаӗ те, ҫарăнса). Ăçтан, камран илтрĕн! Кам каларĕ? Кала ҫасрах мана!

В ĕ л т ĕ р е н. Йал хушшинҫе çынсем калаçаççĕ, епĕ те ĕнер анҫах илтрĕм.

Ç ă х а н. Ех, тăмана ҫĕппи... Хаљ тин, вăхăт иртсен каласа ларан, илтнĕ майпа систереççĕ ăна, епĕ вĕсене çавăнтах тытса йанă пулăттăм. Хаљ ĕнтĕ паллах, салтака мар, тайкана тарнă вĕсем. Çавăнпа та мана систермесĕр, сапран улталаса хутсене илсе кайнă вĕсем.

В ĕ л т ĕ р е н. Епĕ пĕлмен, есĕ пама хушнă пуљ тесе, çавăнпа патăм.

Ç ă х а н. Ну, çитĕ, ҫарăн. Йалтан тухса кайнă-ши, йе кайайман-ши вĕсем? Çавна пĕлесҫĕ. Йалтан тухса кайайман пулсан, çав кĕрт йытти Уљйана патĕнҫе пулĕç. Халех кайса пĕлсе кил. Унта пулмасан, Пăраски патне пăх.

В ĕ л т ĕ р е н (ури çине тăрса). Пĕлсе киллессе килĕп те... Темĕскер пуç ырата пуçларă-ха, те мухмăр йенне кайрĕ... (палăштух çинелле пăхса пуçне хыçаӗ).

Çă х а н (ерех тултарса парса). Ме, пуçна тӳрлет те, кай ҫасрах. Йалтан тухса кайайман пулсан, тытса йарас вĕсене. (Вĕлтĕрен ĕçет те, тухса кайаҭ).

## ИККЁМЁШ КУРĂННИ.

Çă х а н (пĕҫҫен, уткаласа çӳресе). Ак, шуйттансем, мур пакартисем. Саккуна пăхăнми пулҫĕç (аллисене ҫăмăртаса) Епĕ сире... Вĕрентĕп... Пĕлĕр есир мана саккун йĕркине... выçă пыйтăçем... (ларса ерех тултарса ĕçет). Мĕн вăрах килмерĕ тата, ăçта та пулин кĕрсе, ĕçме тытăнҫĕ пул ерех пиҫĕки. Çук, ăна шанса ларса пулмасҭ, хамăнах кайса пĕлес (тăрса алăкран тухма тăраҭ, хирĕç Вĕлтĕрен кĕрет, ӳсĕр, аран калаçаҭ). Ну, мĕнле, пĕлсе килтĕн-и?!

## ВИÇÇЁМЁШ КУРĂННИ.

В ĕ л т ĕ р е н (сĕтел çинелле йăванса) Килтĕм.

Ç ă х а н. Есĕ килнине, епĕ ахаҍ те пĕлетĕп, лешсем ăçта? Çавсене пĕлсе килтĕн-и тетĕп сана.

В ĕ л т ĕ р е н. Пĕлтĕм.

Ç ă х а н. Ăçта? Кам патĕнҫе? Кала ҫасрах. Кайса тытас вĕсене.

В ĕ л т ĕ р е н. Тытас...

Ç ă х а н. Ма каламастăн! Ҫĕлху çĕтрим санăн? Ăçта? Кам патĕнҫе?

В ĕ л т ĕ р е н. Уҍйана патĕнҫе те, Пăраски патĕнҫе те, йалта та—ниçта та çук.

Ç ă х а н (хăвăрттăн утса çӳресе). Ех, шуйттансем, алăран вĕçĕрнҫĕç. Мĕн тăвас-ха вĕсемпе? Йепле алла лектерес йытăсене... (Ларса) Ну, йурĕ, кайнăтăк... кайҫҫĕр. Ниçта та тарса хăтăлаймĕç. (Вĕлтĕрен лараҭ) Сырăв отреҫĕ пурпĕр шыраса тупĕ. (Пӳрнипе йунаса) Ун ҫух вара пĕлĕпĕр

вĕсене мĕн тăвассине... Хаҫ ĕçер-ха (ĕçеççĕ). Ха-ха-ха.. Иван Петровиҫ, ман пуçа ак мĕнле шухăш çитсе кĕҫĕ.

Вĕлтĕрен. Санăн ăс çитĕ Петĕр Куçмиҫ. Кала ҫасрах. Çав Никкăнпа Куçмана йепле лектересси çинҫен-и?..

Çăхан. Ха-ха-ха!.. Ç-у-у-к... Урăх... Хаҫ çĕрле, кунта пире никам та курас та, пĕлес те çук.

Вĕлтĕрен. Курсан, пĕлсен. Кам мĕн тума пултарайĕ пире. Епир камсем? Епир... (кăкăрне çапса) йал пуçлăхĕсем! Мĕн тăвас тетпĕр, çавна тăватпăр. Çапла мар-и Петĕр Куçмиҫ!?.

Çăхан (кулса). Çапла, çапла. Ак мĕн, итле. Пирĕн çакăнта çав Улйинапа Пăраскийе ҫĕнсе килес. Ерехсем пирĕн пур. Кăшт ҫунсене пусарар-ха.

Вĕлтĕрен. Илтрĕм Петĕр Куçмиҫ!

Çăхан. Илтрĕн пулсан, халех кай та, старăçта йыхăрайĕ тесе, иккĕшне те ҫĕнсе кил.

Вĕлтĕрен (тайкаланса тăрса). Пĕр минутран кунта пулĕç.

Çăхан. Есĕ кайса килиҫҫен епĕ мĕн кирлине хатĕрлесе хурăп. (Вĕлтĕрен сулахай алăкран, Çăхан сылтăм алăкран тухса кайаççĕ. Пăртак тăрсан Çăхан ҫетвĕрт ерех йăтса кĕрет).

## ТВАТТĂМĔШ КУРĂННИ.

Çăхан (пĕҫҫен, ҫетвĕртне сĕтел çане лартса). Ҫӳреҫесене авантарах хупас-ха, урамалла курăнмалла ан пултăр. (Каркăçĕсене антарайĕ) Ну, кĕçĕр, шыв çинҫе кимĕпе ишнĕ пек ишетĕп ĕнтĕ. (Сухалĕсене тӳрлеткелесе) 18 çулхи хĕрсемпе выҫаса пăхни мĕне тăрайĕ. Никкăнпа Куçма çӳреҫҫĕр-ха тайка тăрăх сĕтĕрĕнсе... Туҫҫăр револьутси (ларса ҫетвĕртрен тултарса ĕçет. Стсенă хыçĕнҫе сасăсем, ура сассисем илтĕнеççĕ) Килеççĕ! (тăрса тӳрленкелесе, уткаласа çӳрет) Никкăнпа Куçма туйĕсене туса ирттерес-ха кĕçĕр. (Улйинапа Пăраски кĕреççĕ).

Уҫйана (кёнё майпа хăйуллăн). Ҫёр варринҫе мён тума ҫёнтертён-ха пире?

Пăраски (Ҫăхан умне тăрса). Ех, ватă йытă. Ватăлмалăх кунăнта ҫамрăк хёрсемпе выҫассу килсе кăйрё-им? Нумайах савăнса пурăнаймăн. Пёлетпёр епир, есё пире мёншён ҫёнтернине. Тфу... (питёнҫен сурать).

Ҫăхан (ҫемҫен). Ҫимёр-ха, ҫимёр йăмăксем. (Алăк патнелле пырса, алăкне питёрет).

Пăраски (питёрнине курса). Мёншён-ха алăкна питёрен (ҫышса йарать).

Уҫйана. Тусăм, ҫўреҫерен тухса тарар (ҫўреҫе патнелле пырать, Ҫăхан ҫитсе тытать те, ҫуптăват).

Пăраски. Намăссăр! Кёҫҫе пит! Ав мёншён есё пире ҫёр варринҫе ху патна ҫёнтернё... (сётел ҫинҫен ҫупса пырса ҫёҫё илет те, Ҫăхана ҫурăмёнҫен ҫикет. Ҫав вăхăтра Вёлтёрен кёрет).

Ҫăхан. Ай, вё-лер-ҫё-ё-ё... (йăванса кайат. Уҫйанапа Пăраски ҫўреҫерен тухса тăраҫҫё. Вёлтёрен тёлёнсе пăхса тăрать. Ҫаршав майёпен анать).

(*Ҫаршав*).

# ВИҪҪЁМЁШ ПАЙ.

Вăрман*). Шăпҫăк сассисем шăранаҫҫё. Ҫаршав уҫăлнă вăхăтра Никкăн пăшалне аллине тытса, унталла-кунталла пăхкаласа кёрет те, пёр йывăҫ кутне кукленсе ларать.

*) Вăрман тума май килмесен, стсенă ҫинҫе хўтё тума та йурать.

## ПĔРРЕМĔШ КУРĂННИ.

Никкăн (умнелле пăхса). Ку шуйттансене йепле шалалла илĕртсе кӳртес-ха (шик шăхăрать). Кунталла килеççĕ. Ĕнтĕ алла лектеретпĕр (пĕшкĕнсе вăрманалла кĕрсе кайать. Инçетрен йурлани илтĕнет:

Илтеп епĕ, илтеп хыпарсем.

Пуршуйсем тĕнчипех хускалнă.

Çитет вăхăт, çитет йулташсем,

Чурасем ăйхăран вăраннă...

Сырăв, Хаврӳк, Аккук пăшалĕсене аллисене тытса васкаса, чупса кĕреççĕ)

## ИККĔМĔШ КУРĂННИ.

Сырăв (чаранса, унталла-кунталла пăхкаласа). Халь анчах çакăнтан пĕри чупса иртсе кайре. Хам куçăмпа курса йултăм, шăхăрнине те илтрĕм... Ăста кĕрсе карĕ. Ех, сволăч... Шаларах кĕрсе пăхар-ха.

Хаврӳк. Шалалла кĕме Вашăроти хăрушă, мĕншĕн тесен пирĕн куçа курăнни пĕччен мар вăл, унăн йулташĕсем инçетре мар пур пуль (çывăхра йурлани илтĕнет).

Епир тайкара пурăнатпăр,

Тăварсăр лаша аш çисе.

Çитĕ вăхăт—ирĕккĕн сывлăпăр

Пуршуаçийне çĕнтерсен... (пурте пăхса, итлесе тараççĕ)

Аккук (хăраса). Вашăроти, итлĕр-ха! Ку вырăнтан часрах тарар, унсăрăн пире халех çавăрса илĕç.

Сырăв (Хаврӳка). Есĕ халех кайса, отрета кунта илсе кил.

Хаврӳк. Итлеп Вашăроти! (вăрманалла тухса кайать).

## ВИÇÇĔМĔШ КУРĂННИ.

Аккук (урисем чĕтреççĕ). Вашăроти, леш, пирен куçа курăнни, пире илĕртсе шалалла илсе кĕмерĕ-ши? Ку вырăнта пит хăрушă, вăл çитсе йулташĕсене систерсен, пире лектереççĕ вĕсем.

Сырӑв (ҫиленсе). Ех, ҫуламан пӑру. Лектерөҫҫӗ! Хӑраса ӳкрӗн, караттӗлни отрет салтакӗ, топроволӗс—лектересрен хӑраҫ̆. Своля̆ҫ...

Аккук (пушшех ҫӗтрет). Е-е-п-п-ӗ-ӗ... ҫук! х-х-р-р-рамастӑп, ҫапах та ку вырӑн хӑрушӑ.

Сырӑв. Ҫарӑн йытӑ! (револверпе тӗллесе). Ак, ҫакна куратна.

Аккук (ҫӑркуҫланса ларса). Каҫар Вашӑроти! Ан вӗлер, арӑма, аҫа-пӑҫасене тӑлӑха ан хӑвар, шелле...

Сырӑв (кулса). Тӑр ухмах, ахаҫ анҫах епӗ...

Аккук (тӑрса). Вашӑроти, епӗ ав ҫавӑнтарах кайса пӑхам-ха?

Сырӑв. Айакках ан кай.

Аккук. Итлеп Вашӑроти (вӑрманалла кӗрсе кайаҫ̆).

## ТВАТТӐМӖШ КУРӐННИ.

Сырӑв (пӗҫҫен). Мӗнле лектерес-ха? Шӑп ҫак вырӑнта ӗнтӗ вӗсем. Йурланисем те инҫе мар пек. (Пӑшал сасси илтӗнет). Камсем переҫҫӗ унта? (Аккук ҫупса тухаҫ̆).

## ПИЛЛӖКӖМӖШ КУРӐННИ.

Аккук. Пӗтрӗмӗр. Вашӑроти, лешсем пире ҫавӑрса илнӗ. Тарар ҫасрах ҫитсе тытиҫҫен.

Сырӑв. Сана курса пеҫӗҫим?

Аккук. М-м-а-на, ҫут-ҫут лектереҫҫӗҫ, хаҫ те ҫӗре ӳксе ӗлкӗртӗм.

Сырӑв. Миҫен. Нумайӑн-и?

Аккук (аллине сулса). Вӗҫсӗр-хӗрсӗр, шутласа кӑлӑрас та ҫук, пинӗн те пур пуҫ...

Сырӑв (шухӑшласа). Тӗрӗс, лекрӗмӗр. Тарсан та хӑтӑлаҫ ҫук... (револверне кӑларса, хӑйне хӑй кӑкӑрӗнҫен пеме тӑрат. Ҫав вӑхӑтра Никкӑн, Куҫма, тата 4-5 парттисансем пӑшалсемпе ҫупса тухаҫҫӗ).

## УЛТТӐМӖШ КУРӐННИ.

Никкӑн. Стой! Аллӑна ҫӳлелле! (Сырӑвӑн аллинҫен револвӗрне ҫапса ӳкерет). Ҫим-ха, вилме ан васка, малтан каласа хӑвар. Уҫйанапа Пӑраскийе ӑҫта хутӑн?!

Куҫма (Аккука курсан). А-а... есӗ те кунта, ҫалтун (пӑшал куҫӗпе ҫышса йӑвантарса йарать).

Никкӑн (Сырӑва). Ну, мӗн йупа пек хытса тӑран? Кала. Ӑҫта хутӑн?

Сырӑв (пӗр шуралса, пӗр хуралса кайса). Уҫйана тӗрмере. Пӑраски...

Никкӑн. Кала ҫасрах, ӑҫта хутӑн?

Сырӑв. Пӑрски леш тӗнҫере..,

Куҫма (пуҫне аллисемпе тытса). Пӑраскийе... Пӑраскийе (йывӑҫ ҫумне тайанса тӑрать).

Никкӑн (Сырӑва). Ҫут тӗнҫере пурӑнассу килсен, Уҫйанана тӗрмерен кӑлар. Вара вӗлермӗп. Илтрӗн-и! (Кӑсийинҫен хут, кӑранташ кӑларса). Ме, ху аллупа—ҫак хута илсенех Уҫйанана тӗрмерен ҫас кӑларӑр тесе ҫыр.

Сырӑв (пуҫне пӑркаласа). Йурӗ. (Никкӑн аллинҫен хутне, кӑранташне илсе ҫырать).

Никкӑн (Ҫырса пӗтерсен хутне илсе, Аккук ҫине пӑхса). Ей, ҫалтун, мӗн туса выртан? Тӑр-ха, ме ак ҫак хута тӗрме наҫҫалникне леҫсе пар та, Уҫйанана хупа пӗрле ҫак вырӑна илсе кил.

Аккук (сиксе тӑрса). Итлеп Вашӑроти!

Никкӑн (кулса). Ех, шурӑ йытӑ. (Сырӑв ҫине кӑтартса) Акӑ санӑн роти...

Аккук (тӗлӗнсе). А-а-а... (Хутне илет те, вӑрманалла кӗрсе кайать).

## ҪИҪҪӖМӖШ КУРӐННИ.

Никкӑн. Ну, йулташсем, есир ку шурӑ ӑсана штапа илсе кайӑр. Епӗ Уҫйанана илсе килессе кӗтем. Вара пӗлӗпӗр

ӑна мӗн тӑвассине. (Сырӑвӑн аллисене хыҫалалла туртса ҫыхса, вӑрман ӑшнелле илсе кӗрсе кайаҫҫӗ).

Никкӑн. Тинех лекрӗ пирӗн алла. Парӑп ӗнтӗ епӗ сана ҫут тӗнҗе.

(*Җаршав*).

## САККӐРӐМӖШ КУРӐННИ.

Вӑрман. Парттисансен штапӗ—хушӗре. Җаршав уҫӑлнӑ вӑхӑтра хӑшӗ апат пӗҫереҫҫӗ, хӑшӗ сийеҫҫӗ, хут купӑс калаЙ, пӗри ташлаЙ, 3-4 йурлаҫҫӗ:

Епир тайкара пурӑнатпӑр

Тӑварсӑр лаша аш ҫисе...

Сырӑв пуҫне җиксе лараЙ, аллисене хыҫалалла туртса ҫыхнӑ.

Парттисансенҗен пӗри. (Сырӑвӑн ҫӑварне лаша шӑмми хыптарса). Ну-ка, Вашӑроти, пирӗн тайка куҗҗенеҫне ҫисе пӑх-ха...

Иккӗмӗш парттисан. Ха-ха-ха!.. Ҫи, ҫи, мӗн пуҫна пӑркалан, тайка куҗҗенеҫӗ килӗшсех каймасти-мӗн? Ан тирке, кун пек куҗҗенеҫ хулара ҫисе пӑхман пуђ-ха есӗ.

Куҫма. Йулташсем, җимӗр-ха, ан шавлӑр, (шӑп пулаҫҫӗ). Никкӑн темшӗн вӑрах килеймерӗ, Сырӑв салтакӗсем тытса ан илҗҗӗр ӑна. АЙӑр, кам пыраЙ? Цӗлме кайар! (пурте) Кайар... кайар... (Кусма, тата 2-3 парттисан вӑрманалла кӗрсе кайаҫҫӗ. Пӑртак тӑрсан Никкӑнпа Уђийана тухаҫҫӗ).

## ТӐХХӐРӐМӖШ КУРӐННИ.

Парт. пӗри. Акӑ, ҫитрӗҫ вӗсем. Мӗншӗн вӑрах тӑтӑр, җас килмерӗр? Епир Сырӑв салтакӗсем ҫавӑрса илне пуђ тесе, хађ анҗах пӗлме йатӑмӑр.

Никкăн (савăнса). Пире çавăрса илме аллисем кĕскерех-ха вĕсен...

Парттисансенђен пĕри (Сырăв çине кăтартса). Ку шурă ăсанпа мĕн тăвăпăр-ха?

Никкăн. Расхута йарăпăр... (пурте) Расхута!.. Расхута!..

Никкăн (Сырăв умне тăрса). Ну, Вашăроти, есĕ пайан Пăраскишĕн, тата ытти йулташсемшĕн хăвăн пуçупа тӳлĕн. Килĕштеретĕн-и? (Сырăв пуçне лăшт ђикет). Йулташсем, виçĕ çул хушши кĕрешсе, сахал мар ку тайкара ђи хаклă йулташсене çухатрăмăр епир. Ахаљ çухалмарĕç вĕсем, ĕçхалăхĕпе хресђенсемшĕн кĕрешнĕ çĕрте пуçĕсене хуђĕç. Нумай ку тайка тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳрерĕмĕр. Халĕ ĕнтĕ вăхăт çитрĕ. Пăђă тайкаран çуттĕнђене тухар. Ирĕк тĕнђере — çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ хуçалăха хамăрăн çирĕп аллăмарсемпе çирĕплетĕпĕр. Револутси сывă пултăр... (пурте) Револутси сывă пултăр?

Уљйана. Сире ĕçре епир, херарăмсем, пулăшăпăр, сирĕнпе йунашар тăрса ывăнмасăр ĕçлĕпĕр (Куçма, тата унпа пĕрле кайнă парттисансем тухаççĕ)

## ВУННĂМĔШ КУРĂННИ.

Куçма (аллисене çĕклесе). Ура! Йулташсем, хĕрлисем çитнĕ. Епир ирĕкре... (пуртĕ) Урра!. Урра!. (Куçма Сырăв умне пырса). Ну, есĕ манăн савнине вĕлертĕн.

Епĕ сана уншăн хам алăпа... (револљвĕрпе персе вĕлерет)

Пурте. Йытта йыта вилĕмĕ. Револљутси сывă пултăр! Урра! (Катара хĕрлисем курнаççĕ. Стсенă хыçĕнђе:

„Мы красная кавалерия и про нас

Былинники речистые ведут рассказ“, тенĕ йурă сасси илтĕнет. Стсенă хысĕнђи парттисансем йурлама пуçлаççĕ

„Çакă пирĕн йулашки татăклă çапăçу“...)

(*Ђаршав*)

# СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТ-ТĔЛСВИН

## ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТТУРĂРАН СУТЛĂХ ÇАКСЕМ ПУР

1. **И. Викторов.** Йалти кĕвĕсем. 40 стр., 30 пус.
2. **Курак.** Çтихсем. 40 стр., 35 пус.
3. **Шаланкă.** Ирхи сывлăм. 40 стр., 35 пус.
4. **И. Викторов.** Ирĕклĕхшĕн çапаçакансем (пйесса). 35 стр., 35 пус.
5. **И. Викторов, Семенов.** Ђăвашăн илемлĕ литераттурĕ. 151 стр., 90 пус.
6. **П. Золотов.** Çамрăк паттăрсем (пийесса). 36 стр., 35 п.
7. **Максимов.** Револютси кĕввисем. 36 стр., 50 пус.
8. **Максимов.** Ђăваш кĕввисем. 56 стр., 70 пус.
9. **Дорохов.** Çĕнĕ пурнăç. 22 стр., 12 пус.
10. **Семенов.** Мăнастирте (пйессă). 46 стр., 35 пус.
11. **Максимов-Кошкинский.** Икĕ пйессă. 63 стр., 45 п.
12. **Г. Орьев.** Комсомолĕссем (повĕç). 64 стр., 35 пус.
13. **В. Краснов.** Шуррисемпе çапăçни. 112 стр., 45 п.

---

**Кĕнеке илес текенсем укçа сак атрĕспа йарăр:**

Москва, Центр, Никольская, 10.
**Торговому Отделу Центриздата**

**СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ** ҭăваш хресҭенне кирлĕ кĕнекесем кăларса тăрат̆: йалхуҫалăхне тупăшлатса копператсилес тĕлешрен те, куӆттурлăха сарас майпа та, сывлăха сыхлас тĕлешрен те, тата ыттисем ҫинҭен те.

**СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ** активлă хресҭенсене вăӆӆи йалта халăх хушшинҭе ĕҫлеме вĕрентекен кĕнекесем кăларса тăрат: йалсовет ĕҫĕсене майласси ҫинҭен те, копперати ĕҫне аталантарасси ҫинҭен те, пулăшкомсен ĕҫне йĕркелесси ҫинҭен те.

**СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ** партти ҭленĕсене, комсомолĕссене, тата активлă хресҭенсене парттипе Совет влаҫĕ умĕнҭе тăракан сатаҭҭăсем ҫинҭен пĕлтерекен кĕнекесем кăларат̆, вăл парттири лару-тăру синҭен те, йут патшалăхсемпе СССР йепле ҫыхăнса пурăнни ҫинҭен те, СССР умĕнҭе мĕнле сăтаҭҭăсем тăни ҫинҭен те пĕлтерет.

**СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ** комсомолĕссемпе ҫамрăксен умĕнҭе мĕнле сатаҭҭăсем тăни ҫинҭен, йалта вĕсем йепле ĕҫлемелли ҫинҭен пĕлтерекен кĕнекесем кăларат̆.

**СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ** шкулсенҭе веренмелли кĕнекесем каларат̆, пушă вăхăтра вулама калавсемпе сăвăсем, лартса кăтартма—пйессăсем ҫапса кăларат̆.

**СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ** хĕрарăмсен хушшинҭе ĕҫлемелли мелсене кăтартакан кĕнекесем те, амăшсем аҭисене йепле пăхса ӳстермелли ҫинҭен пĕлтерекен кĕнекесем те кăларат̆.

**СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ** кашни хресҭене, кашни парттийĕспа комсомолĕса, ҫамрăка, халăх хушшинҭе кашни хастарлă ĕҫлекен хресҭене кирлĕ кĕнекесем кăларса тăрат̆.

Хакĕ 12 пус. Цена 12 коп.

Х.

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

М. ДАНИЛОВ. В тайге

Редакция МОЛОСТОВКИНА Г.

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СССР

МОСКВА, НИКОЛЬСКАЯ, 10.